Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2011 | ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX | ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII

*100 (7954) №* ✻ *Шӑмат кун, 2011 ҫулхи раштав (декабрь) уйӑхӗн 10-мӗшӗ* ✻ *Хакӗ ирӗклӗ*

## Сывлӑх сыхлавӗнче – 23 ҫул

***Йӳҫкассинче пӗтӗмӗшле практика врачӗн офисӗ 2005 ҫулта уҫӑлнӑччӗ. Ҫавӑнтанпах кунти коллектива пӗтӗмӗшле практика врачӗ Римма Николаевна Михайлова ертсе пырать. Ӗҫ стажӗ унӑн пӗчӗк мар, чӗрӗк ӗмӗре яхӑн. Офис йӗркеличчен вара вӑл ҫакӑнтах участок больницинче тӑрӑшнӑ.***

***Хӑйӗн ӗҫне ӑста пӗлекен, ыттисенчен те ҫавнах ыйтма хӑнӑхнӑ пултаруллӑ специалист коллективра та, кунта килсе ҫӳрекенсем хушшинче те пысӑк хисепре. Вӑл аван ӑнланать: чирлӗ ҫынна эмел тавраш ӗпе кӑна мар, чун ӑшшипе, ҫепӗҫ сӑмахпа та сиплеме пӗлес пулать.***

***Сӑн ӳкерчӗкре: Римма Николаевна ватӑ ҫыннӑн юн пусӑмне тӗрӗслет.***

*В. ШАПОШНИКОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.*



## Михаил Игнатьев: «Влаҫӑн тӗп тивӗҫӗ – халӑхшӑн ӗҫлесси»

**Пресс-конференци**

ЧР Президенчӗ Михаил Игнатьев декабрӗн 7-мӗшӗнче ирттернӗ пресс-конференцире иртнӗ суйлав итогӗсене пӗтӗмлетрӗ. Республика парламенчӗн ӗҫне хакларӗ. Аталану ҫул-йӗрӗсене тишкерчӗ. Пресс-конференцие ЧР Патшалӑх Канашӗн ертӳҫи Михаил Михайловский те хутшӑнчӗ.

Малтанах президент республика суйлавҫисене сасӑлама хутшӑннӑшӑн, хӑйсен гражданла тивӗҫне пурнӑҫланӑшӑн, ответлӑха туйнӑшӑн тав турӗ.

Юлашки ҫулсенче республикӑн нумай йывӑрлӑх витӗр тухма тиврӗ. Финанспа экономика кризисӗ, иртнӗ ҫуллахи шӑрӑх, вӑрмансем ҫунни, тыр-пул тухӑҫӗ пӗчӗк пулни, апат-ҫимӗҫ хакӗсем ӳсни. Апла пулин те ҫынсем йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр сассисене хӑйсем шанакан политика вӑйне панине палӑртрӗ президент.

«Вырсарни кун иртнӗ суйлав гражданасем социаллӑ пурнӑҫ енӗпе хӑйсене мӗнле туйнине кӑтартса пачӗ, вӑл ҫынсен чӑн кӑмӑл-туйӑмне, вӗсем мӗне мала хунине сӑнлакан хӑйне евӗр лакмус хучӗ пулса тӑчӗ. Сасӑлав кӑтартӑвӗсем – гражданасем малашлӑха епле курни, паянхи Раҫҫейпе Чӑваш Ен малашлӑха мӗнле ҫулпа каяссине палӑртни», – терӗ президент.

Суйлав итогӗсемпе Патшалӑх Думинче те, Патшалӑх Канашӗнче те 4 парти фракцийӗ йӗркеленӗ: «Единая Россия», «КПРФ», «Справедливая Россия», «ЛДПР». Чӑваш парламентӗнче лару-тӑру ҫапла: «Единая Россия» партин 33 депутат, «КПРФ» – 4 депутат, «Справедливая Россия» – 5 депутат, «ЛДПР» – 2 депутат.

Республика суйлавҫисем сасӑланине тишкерсен вӗсем «Единая Россия» политика партине ырлани куҫ кӗрет. Пӗтӗмӗшле кӑтартусем ҫапла: «Единая Россия» партишӗн суйлавҫӑсен 43,42 проценчӗ сасӑланӑ, «КПРФ» – 20,90, «Справедливая Россия» – 18,79, «ЛДПР» – 10,67.

Республикӑн ҫӗнӗ парламентӗнче депутатсен 75 проценчӗ «Единая Россия» партирен пулнине палӑртса Михаил Михайловский хамӑр гражданасен пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн ҫине тӑрса ӗҫлеме мӗн пур майсем пуррине каларӗ.

«Пирӗн вӑй – тӗрӗслӗхре», – терӗ президент. Халӑха ялан пӗр пытармасӑр тӗрӗссине калама кирлине палӑртрӗ. Влаҫӑн гражданасене туйса тӑмалла, вӗсен нушисене пӗлмелле.

Суйлав итогӗсем влаҫа кулленхи ыйтусемпе ҫине тӑрса ӗҫлеме хистеҫҫӗ. Ҫынсене паян ӗҫ укҫи пӗчӗкки, шкулсемпе больницӑсене кирлӗ пек ҫӗнетесси, ҫулсемпе хваттерсем кирлӗ чухлӗ тӑвасси, ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх услугисене лайӑхлатасси пӑшӑрхантарать.

«Влаҫӑн тӗп тивӗҫӗ – халӑхшӑн ӗҫлесси, гражданасен пурнӑҫ шайӗпе пахалӑхне хӑпартасси, ватӑ ҫынсемшӗн тимлесси, ҫитӗнекен ӑрӑва тивӗҫлӗ воспитани илме условисем туса парасси. Шӑпах ҫакӑн пек задачӑсем лартать пирӗн халӑх влаҫ умне», – палӑртрӗ президент.

**А. ТИХОНОВ.**

**Тав тӑватпӑр**

### Чӑваш Республикинче пурӑнакан хисеплӗ ҫыннӑмӑрсем!

**Раҫҫей Патшалӑх Думин тата ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗсен суйлавӗсенче «Единая Россия» партишӗн, вӑл сӗннӗ кандидатсемшӗн, Раҫҫей Президенчӗ Дмитрий Медведев тата Парти лидерӗ Владимир Путин тытса пыракан социаллӑ пурнӑҫпа экономика ҫул-йӗрӗшӗн, Чӑваш Енре Михаил Игнатьев пурнӑҫлакан ҫул-йӗршӗн сасӑланӑшӑн сире чун-чӗререн тав тӑватпӑр.**

**Чӑваш Республикинчи суйлавҫӑсем хӑйсен шухӑшне палӑртрӗҫ. Эпир ҫӗр-шывпа республикӑна, хуласемпе ялсене тӑнӑҫлӑ аталанма пулӑшӑпӑр.**

**«Единая Россия» парти Чӑваш Ен ҫыннисен ырлӑхӗшӗн, республикӑри пурнӑҫа лайӑхлатма эсир панӑ наказсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе малашне те яваплӑха туйса ӗҫлӗ.**

***«Единая Россия» партин Чӑваш регион уйрӑмӗ.***

**Кашни ӗҫченӗн яваплӑ пулмалла**

## Статистика органӗ тӗрӗс информаци ыйтать

**Ҫак эрнере район администрацийӗнче ял тӑрӑхӗн специалисчӗсем пухӑнчӗҫ, Чӑваш Республикинчи тата районти статистика органӗн ӗҫченӗсем хутшӑнчӗҫ. Ларӑва район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов уҫрӗ.**

– Статистика органӗ пире тӗрӗс те тулли информаципе тивӗҫтерет, вӗсем ирттерекен ҫырав кӑтартӑвӗ те малашлӑхшӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Информаци тӗрӗслӗхӗ вара малашнехи бюджет укҫи-тенкине йӗркелессипе те ҫыхӑннӑ, – терӗ Юрий Александрович пухӑннисене.

Пӗтӗмӗшле илсен республикӑри статистика органӗ тӗрлӗ учреждениепе организацирен икҫӗр ытла формӑллӑ отчет йышӑнать, вӑл шутра электрон мелӗпе те. Отчетсен ытларах пайӗ конфиденциаллӑ. Суя информаци паракансенчен вара саккун ҫирӗп ыйтать, унпа килӗшӳллӗн отчет тӑвассипе яваплӑ ӗҫчене виҫӗ пин тенкӗрен пуҫласа пилӗк пин тенкӗ таран штраф укҫи тӳлеттерме те ирӗк пур. Ҫавӑн пекех пухӑннисем тӗрлӗ ыйтӑва хускатрӗҫ, отчетсене тӗрӗс тӑвас калаҫӑва та аякра хӑвармарӗҫ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Декабрӗн 12-мӗшӗ – Раҫҫей Конституци кунӗ**

**ХИСЕПЛӖ ЕНТЕШӖМӖРСЕМ!**

Сире Конституци кунӗпе, Раҫҫейре пурӑнакансемшӗн чи пӗлтерӗшлӗ уявсенчен пӗринпе саламлатӑп!

Раҫҫей Федерацийӗн 1993 ҫулта йышӑннӑ Тӗп Саккунӗ пирӗн ҫӗр-шыври право тытӑмӗн тӗп шӑнӑрӗ, обществӑн тӑнӑҫ аталанӑвӗн никӗсӗ, мирлӗ пурнӑҫа упраса хӑварассипе килӗшӳлӗхӗн паллипе шанӑҫӗ пулса тӑчӗ.

Раҫҫей Конституцийӗ паян Чӑваш Ен Правительстви тытса пыракан патшалӑх политикин ориентирӗ, ҫӗр-шывӑн пӗлтерӗшлӗ документне тӗпе хурса эпир ҫынсен пурнӑҫне лайӑхлатма тӑрӑшатпӑр, вӗсен прависемпе ирӗклӗхне, социаллӑ хӳтлӗхне тата тӑнӑҫлӑхне пурнӑҫлассине тивӗҫтеретпӗр.

Нумай нациллӗ Чӑваш Ен Раҫҫей Федерацийӗн Конституцийӗ панӑ хаклӑха яланах сума суса упрӗ. Хисеплӗ ентешӗмӗрсем, тӑнӑҫлӑх, килте татулӑх, ҫирӗп сывлӑх, ӗҫӗрсенче ӳсӗм, ыранхи куна шанӑҫпа кӗтсе илме сунатӑп.

**Чӑваш Республикин Президенчӗ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**Декабрӗн 4-мӗшӗнчи суйлав**

## Ҫапла сасӑларӑмӑр

***РФ Патшалӑх Думин депутачӗсене суйлассипе Муркаш районӗпе ҫапла сасӑланӑ (политика партийӗсемшӗн сасӑ панӑ):***

**– «Единая Россия» – 8419 сасӑ (47,94 процент);**

– «Справедливая Россия» – 2778 сасӑ (15,82 процент);

– «Коммунистическая партия Российской Федерации» – 3207 сасӑ (18,26 процент);

– «Либерально-демократическая партия России» – 2259 сасӑ (12,86 процент);

– «Патриоты России» – 213 сасӑ (1,21 процент);

«Российская объединенная демократическая партия «Яблоко» – 143 сасӑ (0,81 процент);

– «Правое дело» – 59 сасӑ (0,34 процент).

**Пӗр мандатлӑ 8-мӗш Муркаш суйлав округӗпе ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗсене суйлассипе сасӑланӑ (Элӗк тата Муркаш районӗсем кӗреҫҫӗ)**

***Пӗр мандатлӑ 8-мӗш округ территорийӗнче пӗрлехи суйлав округӗ тӑрӑх (политика партийӗсен Чӑваш регион уйрӑмӗсен списокӗсемпе):***

**– «Единая Россия» – 9001 сасӑ (51,28 процент);**

– «Справедливая Россия» – 2583 сасӑ (14,72 процент);

– «Либерально-демократическая партия России» – 2220 сасӑ (12,65 процент);

– «Коммунистическая партия Российской Федерации» – 2918 сасӑ (16,63 процент);

– «Патриоты России» – 332 сасӑ (1,89 процент).

***Пӗр мандатлӑ 8-мӗш округпа ЧР Патшалӑх Канашне депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсемшӗн сасӑланӑ:***

**– Ванеркин Николай Григорьевич – 9377 сасӑ (53,66 процент);**

– Карягин Федор Александрович – 2489 сасӑ (14,24 процент);

– Углев Евгений Петрович – 3043 сасӑ (17,41 процент);

– Ямангеев Владимир Владиславович – 1819 сасӑ (10,41 процент).

***Пӗр мандатлӑ 1-мӗш Октябрь суйлав округӗпе депутатсен Муркаш район Пухӑвӗн депутатне суйлассипе хушма суйлавра ҫапла сасӑланӑ:***

**– Данилов Владислав Григорьевич – 383 сасӑ (50,46 процент);**

– Ораина Тамара Ивановна – 203 сасӑ (26,75 процент);

– Степанов Константин Олегович – 134 сасӑ (17,65 процент).

***Пӗр мандатлӑ 5-мӗш Якаткасси суйлав округӗпе депутатсен Чуманкасси ял тӑрӑхӗнчи Пухӑвӗн депутатне суйлассипе хушма суйлавра ҫапла сасӑланӑ:***

**– Белов Евгений Леонидович – 65 сасӑ (74,71 процент);**

– Чаленко Евгений Викторович – 10 сасӑ (11,49 процент).

**Саламлатпӑр**

Юратнӑ аннене, асаннене, хунямана – Кашмаш ялӗнче пурӑнакан **Ефросиния Кузьминична СКВОРЦОВӐНА** декабрӗн 6-мӗшӗнче 80 ҫул тултарнӑ ятпа ӑшшӑн саламлатпӑр. Пире ҫуратса пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларнӑшӑн чӗререн тав тӑватпӑр. Сывлӑху юман пек ҫирӗп пултӑр, пурнӑҫ ҫулӗ чӑваш сурпанӗ пек вӑрӑм килтӗр. Пире савӑнтарса пурӑнма Турри сана нумай ҫул усратӑр.

Чун юратнӑ анне, асанне,
Эс салхуллӑ ан пул нихӑҫан,
Ӑшшӑн-ӑшшӑн кулса кӗтсе ил,
Телейпе, сывлӑхпа сан ҫитесчӗ 100 ҫула.

**Саламлаканӗсем: ывӑлӗ, кинӗсем, мӑнукӗсем, кӗҫӗн мӑнукӗсем, Суриковсен, Скворцовсен, Замятинсен, Рощупкинсен ҫемйисем.**

**Ҫырӑнтару – 2012**

**«Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата 2012 ҫулхи январь уйӑхӗнчен илсе тӑма унччченхи хакпах ҫырӑнтараҫҫӗ.**
**Ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак: 191 тенкӗ те 70 пус.**

# «Магнолия» кафе пурин кăмăлне те тивĕçтерет

***«Магнолия» кафе иртнĕ эрнере Юнкăпусĕнче уçăлчĕ. Кунта пĕтĕмпех килĕшŷллĕ. Хаксем те кашни çыннах тивĕçтерессĕ. Кафене кĕрсен вара хăвна çăтмахри пекех туятăн: хăтлă залсенче йĕри-тавра илем, лăпкă юрă-кĕвĕ, тарават та çепĕç ĕçченсем, питĕ тутлă апат-çимĕç. Пĕрре килсе техĕмлĕ апат тутаннă хыççăн ку кафене малашне те килес килет.***



Тинех Муркаш районĕнче пысăк уявсем, ытларах туйсем, туллин ирттерме кафе пулчĕ. Туй ирттерме акă пур тăван-хурăнташпа юлташа та чĕнес килет. Анчах та районта пысăк, 180-200 çынна вырнаçтарма май паракан кафе-столовăй пулман. Çавăнпах ытларахăшĕ туй пек пысăк уявсене шкулсен столовăйĕсенче ирттернĕ. Халĕ кун пек пысăк уявсене «Магнолия» кафере ирттерме пулать. Мĕншĕн тесен унта пĕр харăсах 220 çын таранах чĕнме пултаратăр. Шăпах çавăн чухлĕ çынна тутлă та усăллă апат-çимĕç çитермелĕх кунта çĕнĕ сĕтелпукан та, апатланмалли çĕнĕ приборсем те, лаптăкĕ те çителĕклĕ. Усăллă апат-çимĕç хатĕрлеме вара кунта çĕнĕ оборудовани, вăл шутра пароконвекомат та, вырнаçтарнă. Апла пăспа пĕçернĕ апата килĕштерекенсен пĕр тăхтаса тăмасăрах «Магнолия» кафене каймалла.

Пысăк залсăр пуçне «Магнолире» икĕ пĕчĕк зал та хăйсен хăтлăхĕпе чуна илĕртет. Вуншар çын ларма пултаракан залсенче çывăх çынсемпе пĕрле апатланмашкăн та кашнинех килĕшĕ. Кун пирки иккĕленӳ çук. Залсем питĕ илемлĕ, хăтлă, иккĕшĕ – икĕ тĕслĕ. Апла кăмăла кура хăвăра килĕшнине суйлама пулать.

Апатланма килекенсем валли кафе самообслуживани мелĕпе ĕçлет: апат-çимĕç пĕтĕмпех куç умĕнче – мĕн çиес килет, хăшĕ кăмăла каять – çавна суйласа илме пулать. Буфет умĕнче юлташсемпе ларма та питĕ аван: тин кăна пиççе тухнă ăшă кукăле çемçе сĕтелпукан çине канлĕн ларса çиме ятарлă вырăн уйăрнă. Унта вара «Каçхи Шупашкарпа» киленме те май пур.

Кунти условисем пуриншĕн те юрăхлă. Акă кафе ĕçченĕсем валли те кану пӳлĕмĕ пур. Паллах ирхи 8 сехетрен пуçласа 21 сехетчен ĕçлекенĕн йĕркеллĕ канса илме май пурри пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем-çке – тутлă апат пĕçерсе çитерекенсем. Лидия Гаврилова аслă повар кунти ĕçе йĕркелесе пырать. Вăл питĕ ăста специалист, 6 разрядлă повар.

Кафе çуртĕнче аш-какайран çурма фабрикатсем хатĕрлекен цех та ĕçлеме пуçларĕ. Çак цехра туса кăларнă çурма фабрикатсем – экологи тĕлĕшĕнчен таса продуктсем. Мĕншĕн тесен цеха пыракан аш-какай – пĕтĕмпех вырăнти ялсенче пурăнакан çынсем усранă выльăхчĕрлĕх какайĕ. Цеха ветеринари тĕрĕслевĕ витĕр тухнă аш-какая çеç йышăнаççĕ. Кунти ĕçченсем çак какайран хатĕрленĕ апат-çимĕçе кафери сĕтел çине кăна кăлармаççĕ, Мăн Сĕнтĕр райповĕн лавккисене йĕркеллĕ какайран хатĕрленĕ пельменьпе, котлетпа тата ытти тĕрлĕ продуктсемпе тивĕçтереççĕ. Апла Мăн Сĕнтĕр райповĕн лавккисенчен çурма фабрикатсене пĕр шикленмесĕрех туянма пулать.

Кафе урамран та питĕ илĕртŷллĕ. Ун умĕнче транспорт валли те вырăн çителĕклĕ. Кафе Юнкăпуç ялне кĕрес умĕн, трасса хĕрринчех вырнаçнă. Çавăнпа та «Магнолия» ăçта вырнаçнă-ха тесе шырамалла та мар. Вăл алă тупанĕ çинчи пекех курăнса ларать. Тулашĕнчен те илĕртŷллĕ çурта кĕмесĕр иртсе каяс та килмест.

Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн ертŷçи Людмила Петровна Майкова пĕлтернĕ тăрăх кафене пур ыйтăва та тивĕçтерекен пахалăхлă туса çитерме пĕтĕмпе 4 миллион çурă укçа-тенкĕ хывнă. Кунпа пĕрлех хушма 7 ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ. Çакă Мăн Сĕнтĕр райповĕ пирĕн район çыннисемшĕн тăрăшнине тепĕр хут çирĕплетсе парать.

***Кĕçех Çĕнĕ çул уявĕсем пуçланаççĕ. Юлташсемпе е ĕçтешсемпе, е тăвансемпе пĕрле пухăнса çĕнĕ çул уявне «Магнолия» кафере ирттерĕр. Çак илемлĕх тĕнчинче пуçланнă Çĕнĕ çул вара çулталăк тăршшĕпех савăк кăмăл парнелĕ.***

**Н. НИКОЛАЕВА.**

ГИБДД асăрхаттарать

## Хăрушсăрлăх пирки чи малтан шутламалла

Пирĕн район территорийĕнче М–7 трасса иртни икĕ пĕлтерĕшлĕ: пĕрремĕшĕ – тĕрлĕ хуласене кайса çӳреме меллĕ, иккĕмĕшĕ – çавна май федераллă çул çинче транспорт юхăмĕ питĕ пысăк. Çапла вара «Мускав – Ĕпхӳ» автоçул çинчи хăрушă аварисен, инкексен пĕр пайĕ пирĕн район территорийĕнче пулса иртет.

Акă виçĕм кун та, декабрĕн 8-мĕшĕнче, кунта инкек сиксе тухрĕ. Етĕрнепе пирĕн район чикки çывăхĕнче йывăр тиевсем турттаракан машина хирĕç килекен транспорт речĕ çине тухса каять, хирĕç пыракан КамАЗпа çапăнать. Хире-хирĕç çапăннăскерсене иккĕшне те тӳрех çулăм хыпса илет, çунма пуçлаççĕ. Водительсене Етĕрне больницине васкавлăн леçме тивет. Вĕсен пĕр документне те çăлса хăварма май килмен. КамАЗ пассажирне те медицина пулăшăвĕ пама лекет.

Çак хăрушă инкек, паллах, пулмасан та пултаратчĕ ĕнтĕ, енчен те хирĕç килекен транспортсен речĕ çине тухас умĕн водитель хăрушсăрлăх пирки тĕплĕн шутланă, лару-тăрăва тĕрĕс хаклама пултарнă пулсан.

Çавăнпа та руль умĕнче çанталăк условийĕсене, уйрăмах пăрлак, тĕтре, çил-тăман чух, нихăçан та шута хума ан манăр.

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**ГИБДД уйрăмĕн инспекторĕ.**

«Промагрофонд» сĕнет

# «Пулас пенси пирки маларах шутламалла»

***Раççей çыннисем патшалăхăн шутланман пенси фончĕсемпе (НПФ) ытларах кăсăкланма пуçларĕç, çакăн йышшисен хисепĕ пĕтĕмĕшле 11 миллион çынпа танлашать. Хальхи вăхăтра çĕр-шывăн пенси рынокĕнче çĕр ытла фончĕ ĕçлет. Акă «Промагрофонд» НПФ пенси системинче 17 çул çынсен ыйтăвне туллин тивĕçтерет, çĕнĕрен те çĕнĕ клиента хăй шутне илет, тĕрлĕ консультаци, пенсие ӳстерес енĕпе сĕнӳ парать. Эпĕ Шупашкар хулинче вырнаçнă «Промагрофонд» филиалĕн директорĕпе И.Н. Косяковăпа тĕл пулса калаçу ирттертĕм, хăш-пĕр ыйту çине хуравлама ыйтрăм. Ку филиал фондăн Вăтам Атăлти дирекцийĕ шутланать, Чăваш, Мари Эл, Тутар тата ытти хăш-пĕр республикăпа хулана пĕрлештерет. Чăваш Енре фонд филиалне 2008 çулта уçнă.***

**– Ирина Николаевна, «Промагрофонд» Раççей шайĕнче ырă енĕпе палăрма ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ. Халăхра сире шанаççĕ, çакна сирĕн ĕç кăтартăвĕ те çирĕплетет. Хăвăр организаци ĕç-хĕлĕпе паллаштарăр, тархасшăн, хаçат вулакансене.**

– «Промагрофонд» халăх шанăçне чăннипех те тӳрре кăларма пултарать, халĕ вăл Раççейре 113 представительство уçнă. Çĕр ытла фонд хушшинче «Промагрофонд» нумай кăтартупа малти вырăнта, вăл малти 10 фонд йышне кĕрет. Пирĕн патра страхланнă çынсен хисепĕ 1 миллион та 450 çынпа танлашать, вăл шутра Чăваш Республикинчи клиентсен хисепĕ 30 пин. Муркаш районĕнчен те пирĕн клиентсем пур. Пирĕн фондăн устав ĕçне тивĕçтермелли пурлăх шайĕ 20 миллиард та 500 миллион тенкĕпе, пухăнса пыракан пенсин пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 17 миллиард та 500 миллион тенкĕпе танлашать. Кăçал «Промагрофонд» НПФ çумне маларах хăй ĕçне туллин пурнăçланă «Русь» НПФ хутшăнчĕ. Çапла вара ĕç калăпăшĕ татах ӳсрĕ. Фонд обязательнăй пенси страхованийĕпе тата патшалăхăн шутланман пенси тивĕçтерĕвĕпе услугăсем туллин парать, хушма пенсин программине тĕллевлĕ пурнăçлать. «Промагрофонд» пурлăх шайĕ çулсеренех ӳссе пырать.

**– Пулас пенсин патшалăх софинансировани программи пирки калаçăр-ха?**

– Ку вăл пулас пенсие пысăклатма патшалăх туса панă питĕ лайăх мел. Вăл гражданинпа патшалăх хывакан взноссенчен пухăнать. Пĕрремĕш взнос тӳленĕ самантран пуçласа çын софинансировани программине 10 çул хутшăнать. Программăна вара 2013 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнчен кая юлмасăр кĕмелле. Çакă пысăк сроклă та тупăшлă, çынсемшĕн чăннипех те меллĕ проект. Кунта сăмах çулталăкри 100 процентлă тупăш пирки пырать. Çакна урăх нимĕнле финанс инструменчĕ те памасть. Инвестициленине шута илсен вара тупăшлăх татах та пысăкрах. Илнĕ инвестици тупăшĕ сирĕн лицевой счет çинче паллă пулĕ.

Тĕслĕх илер-ха, сирĕн взнос 2 пин тенкĕпе танлашнă. Патшалăх та çакăн пек укçа калăпăшнех хушса панă, çапла вара сирĕн пенси счечĕ çинче 4 пин тенкĕ пухăннă. Енчен те эсир пухăнса пыракан пенси укçине иртнĕ çул “Промагрофонд” НПФа куçарса панă пулсан çулталăк хушшинче çак сумма тата тепĕр 10 процент – 400 тенкĕ ӳснĕ. Çавна та манма кирлĕ мар, енчен те эсир хывнă сумма çулталăкне 2 пин тенкĕрен кая пулсан, патшалăх ăна финансламасть. Енчен те вара програмăна хутшăнакан хывнă сумма 12 пин тенкĕрен ытларах чухне патшалăх 12 пин тенкине кăна финанслать.

Укçан пĕр пайĕ пуласлăхра мар, çывăх вăхăтра сирĕн пата таврăнать. Пенсисен софинансированийĕн программипе тӳленĕ взносен сумминчен эсир социаллă налук вычетне 13 процент илетĕр. Кун йышши налук çăмăллăхĕсем патшалăхăн шутланман пенси тивĕçтерĕвĕн договорĕпе хушма пенси программисем тăрăх тӳлекен взноссем тĕлĕшпе те ĕçлеççĕ.

Ют çĕр-шывсенчи ватă çынсен пенси калăпăшĕ пысăк, вĕсем лайăх пурăнаççĕ тенине тăтăшах илтме пулать халăх хушшинче. Пулас пенси калăпăшĕ чăннипех те пысăк пултăр тесен вара çамрăклах тăрăшма пуçламалла. Софинансировани программине кĕмешкĕн заявлени пама Раççей Пенси фончĕн хăвăр пурăнакан вырăнти управленине те, патшалăхăн шутланман пенси фончĕсене те, вăл шутра “Промагрофонд” НПФа та юрать. Пирĕн филиалта куллеnex халăха тӳлевсĕр консультацисем параççĕ. “Промагрофондăн” партнерĕсем чылай. «Промагрофонд» НПФсен Наци Ассоциацийĕн членĕ, «Раççейри машинăсем тăвакан союзĕн» членĕ, космос ĕçĕ-хĕлĕн тата Раççейри ДОСААФ участникĕсен, пенси программисен пĕтĕм тĕнчери Ассоциацийĕн партнерĕ.

Чӳк уйăхĕнче «Промагрофонд» НПФ «Финансовая жемчужина России» премийĕн лауреачĕ пулса тăчĕ, «Çирĕп шанчăк» номинацин çĕнтерӳçи пулчĕ.

**– Çапах та тĕрлĕ фонд тĕрлĕ енлĕ тупăш шантарать. Çынсен вара вăл е ку организацие епле суйласа илме пĕлмелле-ха?**

– Кунта вара пысăк тимлĕх кирлĕ. Чи малтанах çыннăн фонд ĕç стажне пĕлмелле. Фондăн темиçе çул хушшинчи тупăш шайĕпе кăсăкланмалла. Çак фонда миçе клиент суйласа илни, фонд пурлăхĕ питĕ кирлĕ кăтарту. Паллах, çыннăн вăл е ку фонда суйласа илме ирĕк пур, анчах та кашни çул тĕрлĕ фонда куçни вырăнлах та мар.

Патшалăх çĕнĕ Федераллă Саккун йышăнчĕ, унта пулас пенсин пухăнса пыракан пайне тӳлессин йĕркине çирĕплетнĕ. Ун пирки каярах тĕплĕн пĕлтерĕпĕр.

Пирĕн филиал сире яланах хапăл тăвать. Эпир çак адреспа вырнаçнă: **Шупашкар хули, Ярославская урам, 29-мĕш çурт, 109 офис**. “Промагрофонд” специалисчĕсем тăтăшах çынсем патне тухса çӳреççĕ. Ку тĕлĕшри кирек епле ыйтупа та пирĕн пата çак номерсемпе шăнкăравлама пулать: **(8352) 62-20-30, 62-17-54.**

«Промагрофонд» пурне те çитсе килекен Çĕнĕ Çул ячĕпе саламлать. Çирĕп сывлăх та телей, çемьере килĕшӳ сунать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

Сывлăх – малти вырăнта

# Пахалăхсăр эрех сентре çине ан лектĕр

Никамшăн та вăрттăнлăх мар, алкоголь продукцийĕ суту-илӳ ĕçĕнче пысăк тупăш парать. Çын сывлăхне вара уйрăмах пахалăхсăрри хавшатать. Çавăн пекех саккуна пăхăнмасăр сутнă пахалăхсăр эрех бюджета тăкак, ултавçă кĕсйине тупăш кӳрет. Çавна май ку ыйтăва Раççей Президенчĕ Д.А. Медведев малти вырăна кăларчĕ, вырăнсенче ку тĕлĕшпе çирĕп йĕрке пулмаллине, кирек камăн та асăрханулăх кирлине палăртрĕ. Çакна тĕпе хурса Чăваш Ен Президенчĕ М.В. Игнатьев республикăри суту-илӳ точкисенче пахалăхсăр, суя эрех сутассине чарас тĕлĕшпе пурнăçламалли ĕç çирĕплетрĕ.

Çапла вара Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин малтанхи пĕлтерĕвĕ тăрăх пирĕн республикăна 6,6 миллион тенкĕлĕх 76, 5 пин кĕленче суя акциз маркисемлĕ алкоголь продукцийĕ кӳрсе килнĕ. Суту-илӳ точкисене пахалăхсăр эрех сарассипе «Беркут 3000» ООО тимлени паллă.

Суту-илӳ точкисенче ирттернĕ тĕрĕслев вăхăтĕнче çакăн пек маркăллă пахалăхсăр алкоголь продукцине тупса палăртнă: «Выбор «Хлебная» 0,5 литр кĕрекен савăтра, 98 тенкĕрен пуçласа 124 тенкĕ таран, «Пшеничная» 0,5 литр кĕрекен савăтра, 98 тенкĕрен пуçласа 130 тенкĕ таран, «Старорусская» 0,5 литр кĕрекен савăтра, 98 тенкĕрен пуçласа 115 тенкĕ таран. Çак продукцире сывлăхшăн сиенлĕ тĕрлĕ хутăш, вăл шутра ацетон тата ытти наркăмăш пулни паллă. Çавна май тĕрĕслев вăхăтĕнче тупса палăртнă продукци партине экспертизăна ăсатнă.

Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн министерстви эрехпе сутă тума лицензи парать. Çавна май суя эрех сутнине тупса палăртас тесе çак орган кирек хăçан тата кирек хăш суту-илӳ точкинче тĕрĕслев ирттерме пултарать. Пахалăхсăр эрех сутакансене тупса палăртас, ун йышшисене сутма чарас тĕллевпе ирттерекен тĕрĕслев малалла пырать. Хальлĕхе вун ултă тĕрлĕ суя эрех тупса палăртнă. Акă мĕн вырнаçнă лавккасенчи сентресем çинче тата мĕнпе наркăмăшлать хăйне «симĕс çĕлене» кăмăллакан. Çакăнта вара кашниех шухăшласа пăхма тивĕç пулĕ тетĕп.

Çапла вара тĕрĕслев енĕпе яваплă органсем пирĕн республикăра пахалăхсăр эрехпе тупăш тăвакан сакăр организацие шута илнĕ. Шел пулин те, кĕленчери хаяр шĕвек сĕнекенсем пирĕн районти лавккасене те аякра хăварман. Çапла вара тĕрĕслев ирттерекенсем Муркаш райповĕн гастроном тата «Волна» магазинĕсенче те пахалăхсăр эрех сутнине тупса палăртнă.

Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн министерствин сайтĕнче пахалăхсăр алкоголь продукци сутни пирки халăхран тĕрлĕ информаци илес тата суя эрех çинчен тĕрлĕ информаци пĕлтерес тĕлĕшпе ятарлă «хĕрӳ лини» баннер уçнă. Унта эсир хăвăра кăсăклине тупма пултаратăр.

**Ку ыйтупа эпĕ Муркаш райпо канашĕн председателĕпе Б.В. Андреевпа çыхăнтăм. Акă мĕн пĕлтерчĕ вăл:**

– Рынок хутшăнăвĕнче эрех кăларакан производствăра ĕçлекен тӳрĕ кăмăллă мар çынсем налук тӳлес мар тесе тĕрлĕ майсем тупма тăрăшаççĕ. Çакă эрех кăларакансем акциз сахалтарах тӳлеме тăрăшнипе çыхăннă. Пĕр тĕслĕхĕ вăл – производствăран тухнă эрех савăчĕ çинче хăш-пĕр федераллă маркисем ЕГАИС (Единая государственная автоматизированная информационная система) информаципе танлашман, çавăнпа та вĕсене контрафактлă эрех шутне кĕртнĕ, тĕрĕссипе вара пахалăхĕ тивĕçлех. Сăмахран, эрех кăларакансем, ЕГАИС килĕшӳллĕн, 26 процентлă «Винный» напитокăн 0,3 литрлă кĕленчи çинче пулмалли федераллă ятарлă маркăна Брендин, 40 процентлă, 0,5 литрли çине çыпăçтарнă.

171-мĕш Федераллă Саккунпа килĕшӳллĕн, контрафактлă эрех Муркаш райповĕн суту-илӳ лавккисенче ан пултăр тесе ятарлă тĕрĕслев приборĕсем илетпĕр.

Вырăнта йĕркеленĕ комисси пур суту-илӳ лавккисенче те тĕрĕслев ирттернĕ, ЕГАИС информаципе танлашман эрехе сутма пăрахнă, курттăммăн тавар сутакана тавăрса панă.

**Р. МАКАРОВА.**

# Вырăнти хăй тытăмлăх: Ильинка ял тăрăхĕ

## Хамăр пулмасан тата кам?

*Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçĕ-хĕлĕ нумай енлĕ те кăткăс пулни, кунсерен тенĕ пекех вуншар тĕрлĕ ыйту татса пама тивни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Мĕншĕн тесен вырăнти пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парассине халĕ пĕтĕмпех вырăнти влаç органĕсем çине хунă. Кулленхи пурнăçра вара вĕсем ял çыннисен сахал темелле мар.*

*Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче Юрий Викентьевич Перцев тăрăшать. Иртнĕ çулхи суйлавра вырăнти суйлавçăсем ăна ял тăрăхне ертсе пыма шаннă, вăл суйлава хутшăннисен сассине 76,79 процент пухма пултарнă.*

*Унтанпа çулталăк иртрĕ ĕнтĕ. Мĕн каласа пама пултарать хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки Юрий Викентьевич, мĕнле шухăшсем канăç памаççĕ ăна паян? Çакăн пирки интереслентĕм эпĕ унпа тĕл пулнă май.*

**Кĕске справка. Ю.В. Перцев 1961 çулта çуралнă. 1987 çулта Чăваш ял хуçалăх институтне вĕренсе пĕтернĕ. Ăна ученăй агроном квалификацине панă. Ял тăрăхĕн пуçлăхне суйличчен "Хлебороб" пĕрлешӳллĕ хуçалăхра тĕп агроном пулса 22 çул ĕçленĕ.**

– Çапла, ĕçĕ чăннипех те çăмăл тесе каламастăп. Тĕрĕссипе кирек епле ĕç те вăл тивĕçе чуна парса тата ответлăха туйса пурнăçлатăн пулсан çапла пулĕ. Анчах та ял тăрăхĕн пуçлăхĕн куллен çынсемпе ĕçлеме тивет. Вĕсен пур ыйтăвĕсене татса парасси, пурне те юрăхлă та çураçуллă йышăнусем тăвасси хăш чухне пулаймасть те.

Çитменнине халĕ ял çынни те цивилизациллĕ пурăнасшăн. Ялта пурăнакана газĕ те, çулĕ те, шывĕ те, ытти те кирлĕ. Культура, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтересси те пĕлтерĕшлĕ. Çакна хирĕçлесе нимĕн те каламастăп. Ку чăннипех те çапла пулмалла. Анчах та хальхи вăхăтра кирек епле ĕç те чи малтанах укçа-тенкĕпе çыхăннă. Çитменнине пысăк суммăсемпе. Ял тăрăхĕн бюджечĕ çине кăна шаннипе вара ытлашши темех тума май çук.

Пĕр тĕслĕх кăна. Акă Мăн Шашкарти клуб çуртне суд йышăнăвĕпе вăхăтлăха хупма тиврĕ. Сăлтавĕ – юсав ĕçĕсем туса ирттерме вăхăт çитни. Ăна валли вара сахалтан та 3 миллион тенкĕне яхăн укçа кирлĕ пулать. Çав вăхăтрах ял тăрăхĕн çулталăкри бюджечĕ те 3,2 миллион тенкĕ кăна. Халĕ шухăшласа пăхар: ку укçатенкĕпе çулсем тумалла-и, ялсене шыв кĕртмелле-и, культурăпа йăла объекчĕсене пăхса тăмалла-и, территорисене тирпей-илем кĕртмелле-и...

**Кĕске справка. Ял тăрăхĕн территорийĕнче 17 ял, вăтам шкулпа пуçламăш шкул-ача сачĕ, пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕпе фельдшерпа акушер пункчĕсем 3, ялти 3 библиотека, 3 Культура çурчĕпе клуб.**

Пĕр сăмахпа, пуç ватмалăх пур. Çавăнпа та ытларах чухне уйрăм çынсен, депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕсен, ялсенчи старостăсен пуçарулăхĕ, вĕсен тимлĕхĕпе тăрăшулăхĕ çине шанмалли кăна юлать. Вĕсем вара пирĕн çук мар. Чи малтанах депутатсенчен Геннадий Пигенешевăн, Галина Овчинниковăн, Михаил Бычковăн, Игорь Каргинăн, старостăсенчен Ильинкăри Алексей Лоцмановăн, Хыркассинчи Владимир Димитриевăн, Вăрманкассинчи Нина Шишокинăн, Мемеккассинчи Иван Пигенешевăн, Хопкĕперти Александр Матвеевăн, Тренккăри Иураида Ярteeвăн тата ыттисен ячĕсене ырăпа асăнса хăварнă пулăттăм.

Ялсене газ кĕртес ĕçсене вĕçленĕ ĕнтĕ, ялсем патне асфальт сарнă çулсем те çук мар. Анчах та ялсем тăрăх, урамсенче çулсем тăвассипе ĕçлемелли çителĕклех темелле. 17 ял урамĕсенче йĕркеллĕ çулсем тăвасси пĕр-ик çул хушшинче татса памалли ыйту мар.

Ялсенче шыв пăрăхĕсем те кивелсе пыраççĕ, шыв уçлакан башньăсене те тăтăшах юсаса тăмалла. Апла пулин те хальлĕхе саплашкаласа пурăнма тивет. Çапах та ял çыннисен укçитенкипе те пулин Хыркассинче кăçал шыв пăрăхĕсене хурса пĕтерме палăртатпăр. Кунти ĕçсене Галина Овчинникова депутатпа Владимир Димитриев староста япăх мар йĕркелесе пыраççĕ. Çитес çул валли вара Мемеккассинче шыв уçлакан башня вырнаçтарма бюджетра укçа-тенкĕ пăхса хăвартăмăр. Ильинкăра ял çыннисем хăйсен вăйĕпех шыв башнине юсарĕç. Апчарта, Хунтăкассинче, Куçкинра шыв пăрăхĕсем хума çулталăк вĕçленнĕ тĕле проектсем хатĕрлесе çитерме палăртатпăр. 2013–2014 çулсенче ку ялсенче те çынсене ĕçмелли пахалăхлă шывпа тивĕçтерессин ыйтăвне татса пама палăртатпăр.

Юлашки вăхăтра тата тирпей-илем, тасалăх, çӳп-çап пухассин ыйтăвĕсем çивĕчленни палăрать. Унсăр та май çук. Пĕтĕм тасамарлăха ăçта килчĕ унта йăвантарнипе нимĕн те пулмасть. Çакна ерипен те пулин ял çыннисем те ăнланма тытăнаççĕ. Çӳп-çапа ялсенче уйрăм вырăна михĕсене тултарса пухса хурассине, кайран пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн ятарлă автомашинипе полигона турттарса тухассине йĕркелерĕмĕр.

Обществăлла вырăнсенче, масарсем çинче йĕрке тăвассине манăçа хăвармастпăр. Акă кăçал масар картине çĕнĕрен тытрăмăр. Çитес çул вара унта пымалли çула тума депутатсем бюджетра укçа пăхса хăварчĕç. Кунпа пĕрлех выльăхсен 3-шер гектар йышăнакан 2 масарĕ йĕри-тавра 2 метр çӳллĕш хӳме тытса çавăртăмăр.

Пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессине те манăçа хăварма юрамасть. Ятарлă пушар автомашинине тытса тăракан çук пирки кăçал пĕр мотопомпа туянтăмăр. Çитес çул татах тепре туянмалла пулать. Ку енĕпе пирĕн ялсене Муркашри пушар чаçĕн Мăн Сĕнтĕрти посчĕ пăхса тăрать.

Тепĕр пысăк ыйту – сухаламалли çĕрсемпе эффективлă усă курасси. Вырăнти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем арканса кайнă май вĕсен çĕрĕсемпе усă курасси пĕлтерĕшлĕ. Мăн Шашкарта Александр Мерловăн, Мемеккассинче Родион Каргинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсем ĕçлеççĕ ĕнтĕ. Кунсăр пуçне çĕр пайĕсене арендăна илсе Андрей Пихтеров, Владислав Бархаткин, Анатолий Трепнев тата ыттисем те ял хуçалăх культурисем акса тăваççĕ. Анчах та ку çителĕклĕ мар-ха. Усă курман сухаламалли çĕрсем татах 320 гектар.

Уяв кунĕсене, юбилейсене, ытти тĕрлĕ мероприятисене пĕрле пухăнса савăнăçлă ирттерессине манăçа кăларма шутламастпăр. Ватă çынсене, ветерансене чысласси те хисепре. Ку енĕпе вырăнти культура, вĕрентӳ ĕçченĕсене ырăпа палăртмалла. Çак ĕçре пире вара спонсорсем йывăрлăхра хăварманни савăнтарать. Депутатсен районти Пухăвĕн депутатне Валерий Кожанова, хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисене Александр Мерлова, Родион Каргина, Андрей Пихтерова, "Юман" чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçине Михаил Бычкова, "Волга" чикĕллĕ яваплăхлă общество ертӳçине Юрий Данилова тав сăмахĕ кăна калама пултаратăп.

Епле пулсан та ял çынни малаллах пăхать, мал туртăмпах пурăнать. Ялта çĕнĕ çурт-йĕр çавăракан çамрăк çемьесем сахал мар. Çĕнĕ урамсем йĕркеленеççĕ. Апла пулсан вĕсенче те çулне те тăвас пулать, газне те кĕртмелле, шывĕ те кирлĕ, электричестви те. Кăçал çĕнĕ 3 урамра электричество кĕртме проектсем хатĕрлерĕмĕр. Ытти ĕçсене те ерипен те пулин пурнăçласа пыма тăрăшатпăр.



## Старостăран та нумай килет

Мемеккасси ялĕнче пурăнакансем хăйсен старости пулма Иван Павлович Пигенешева шаннă. Ăнсăртран мар. Ял çыннисен ыйтăвĕсем уншăн ют мар. "Тĕлĕрсе кайма памасть",– тет ун пирки шӳтлерех ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.В. Перцев.

Иван Павловича, апла пулсан кунти ял çыннисене канăç паман ыйтусем вара çук мар. Çӳп-çап ыйтăвнех илер. Ял тăрăхĕн территорийĕнчи ялсенчен ăна полигона турттарассине йĕркеленĕ пулин те, хăшĕсем унчченхи йăлана пăрахасшăн мар. Çырмасемпе пахча хыçĕсенче кăна мар, вăрмансенче те тасамарлăх çук мар.

Çул ыйтăвĕ те çивĕччисенчен пĕри. Ял çыннисем кĕрхи-çурхи йĕпе-сапара пылчăкра, хĕлле çул çуккипе нуша кураççĕ. Кунта хăйăрпа вак чул сарса тухассин ыйтăвне татса парасшăн староста. Кунпа пĕрлех ялта, шыв пур пулин те, шыв уçламалли башня кивелсе çитнĕ ĕнтĕ. Ял урамĕсене каçхине электричество хунарĕсемпе çутатассипе те ыйтусем пур.

**Сăн ӳкерчĕкре: И.П. Пигенешева (сулахайри) ял тăрăхĕн администрацийĕнче тăтăшах тĕл пулатăн. Унăн ял тăрăхĕн специалисчĕпе Е.А. Волковпа та татса памалли ыйтусем çук мар.**

## Сывлăх сыхлавĕ çирĕп алăра

Тренккăри ялти врач амбулаторине 1987 çулта уçнă. 2009 çултанпа вăл – пĕтĕмĕшле врач практикин офисĕ. Амбулатори уçнăранпа 2002 çулччен заведующи пулса кунта Нина Леонидовна Маркова акушерка тăрăшнă.

Халĕ коллектива пĕтĕмĕшле врач практикин офисĕн врачĕ Николай Егорович Иванов ертсе пырать. Кунта вăй хуракан медицина ĕçченĕсенчен ытларахăшĕн ĕç стажĕ пĕчĕк мар. Хăйсен ĕçне аван пĕлекен 6 специалист вăй хурать кунта. 12 ялти 1625 çыннăн сывлăхне тĕрĕслесе пăхса тăраççĕ вĕсем. Кунсăр пуçне пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тата пуçламăш шкулсем, 2 ача сачĕ. Медицина ĕçченĕсем чир-чĕртен сиплессине кăна мар, профилактика ĕçĕсене вăхăтра тата кирлĕ шайра туса ирттерессине, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассине, гигиена воспитанийĕ парассине те хăйсен тивĕçĕ тесе шутлаççĕ.

Территорире фельдшерпа акушер пункчĕсем Апчарта, Вăрманкассинче тата Мăн Шашкарта вырнаçнă. Вĕсем те вырăнти çынсен сывлăхне сыхлас ĕçе тивĕçлĕ тӳпе хываççĕ.

## Культура пурнăçĕ пуян



Ял тăрăхĕн территорийĕнче Культура çурчĕсем Тренккăра, Апчарта тата Вăрманкассинче, ялти библиотекăсем Ильинкăра, Шашкарта тата Апчарта. Ильинка библиотекипе Ильинка ял тăрăхĕн администрацийĕ Тренккăра, Тренккăри Культура çуртĕнче вырнаçнă. Кунти Культура çурчĕпе библиотека база учрежденийĕсем шутланаççĕ.

Культура çурчĕсемпе библиотекăсем ял çыннисен пурнăçне илемлĕрех, хаваслăрах, усăллăрах тăвас тесе тăрăшаççĕ. Календарьти паллă кунсемпе уяв кунĕсене, юбилейсене хатĕрленсе ирттересси ытларах вĕсем çине тиенет. Культура учрежденийĕсенче сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Тĕрлĕрен спорт ăмăртăвĕсем ирттересси йăлана кĕнĕ. Ноябрь уйăхĕнче Тренккăра "Большая Волга", Аслă Çĕнтерӳ кунĕнче Вăрманкассинче Г.Ф. Перлов кубокне çĕнсе илессишĕн, хĕл ăсатăвĕн уявĕнче Апчарта В.А. Храмова асăнса ăмăртусем ирттеççĕ. Юлашки вăхăтра унччен манăça тухнă Çăварни уявне Мăн Шашкарта ирттерме пуçăнтăмăр.

Çамрăксем пушă вăхăта усăллă ирттерччĕр тесе Культура çурчĕсенче теннис, шахмат кружокĕсене йĕркеленĕ. Хĕрсем валли аэробика кружокĕ ĕçлет. Çамрăксем кăна мар, çулланнисем те пушă вăхăтра культура учрежденийĕсене туртăнаççĕ.

Культура çурчĕсем çитĕнекен ăрăва та манса хăвармаççĕ. Вĕсем валли Культура çурчĕсенче прикладной искусство кружокĕсем пур. Кунта вĕсем хăйсем мĕн пултарнине пĕтĕмпех кăтартма пултараççĕ: çыхаççĕ, ӳкереççĕ, пластилинран кĕлеткесем ăсталаççĕ, интереслĕ тĕрлĕ хатĕрсем шутласа тупаççĕ.

Чылайăшĕ Культура çурчĕсем çумĕнчи художество пултарулăх коллективĕсене хаваспах çӳрет. Вырăнти артистсен илемлĕ чăваш тумĕ, хаваслă юрри-ташши пурне те тыткăнлать.

Библиотекăсем те паянхи пурнăçпа тан пыма тăрăшаççĕ. Ялсен историне, паллă ентешсене, ял тăрăхĕн историне халалласа электронлă презентацисем йĕркелессипе библиотекăсенче пысăк ĕç туса ирттереççĕ. Çынсене, уйрăмах çамрăксене право енĕпе пĕлӳ парассине пысăк вырăн уйăраççĕ. Вулакансем "Медиатекăпа" тата унăн электронлă изданийĕсен пуян коллекцийĕпе анлăн усă кураççĕ.

## Чиркӳ тăвас ĕçе пуçăннă

Ильинка чиркĕвĕн историйĕ интереслĕ. Пысăк йывăç чиркĕве кунта 1750 çулта туса лартнă пулнă. 1779 çулта вăл çиçĕме пула çунса кайнă. 1783 çулта ун вырăнне чулран чиркӳ çĕклеме пуçăннă. Ăна 11 çул иртсен 1794 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче çутатнă (светить тунă). Октябрьти революци хыççăн чиркӳ çуртĕнче шкул уçнă.

1980-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Шупашкар ГЭС-не хута янă май Атăл шывĕ хăпарнă, чиркӳ çурчĕ шывпа тип çĕр чиккинче юлнă. Пурăна киле стенасем ишĕлме пуçăннă.

Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕн В.И. Кожановăн тата вырăнти активистсен пуçарăвĕпе кивĕ чиркӳ çуртне пăсса Ильинкăра унччен чиркӳ пулнă вырăнтан инçех мар çĕнĕ чиркӳ тăвас ĕçсене пуçăннă. Ку ĕçсене Муркашри Владимир Турă Амăшĕн турăшĕн чиркĕвĕн настоятелĕ Федор атте пилленĕ.

Ырă пуçарура пĕччен пулмăпăр тесе шанаççĕ Ильинкăсем.

## Ильинка тăрăхне урăххипе пăтраштараймăн



Ильинка тăрăхĕ чăннипех те хăйне евĕр. Анлă Атăл юхан шывĕн хĕрри, чăвашсен 470 çулхи юмансен юманĕ **(сăн ӳкерчĕкре)**, республикăри пĕртен-пĕр шыв сикки, вăрман тăрăхĕсем, сиплĕ сывлăш... Такама та илĕртеççĕ вĕсем. Ильинкăра пĕрре пулса курнă çын ăна яланлăхах ас туса юлать.

24 çул хушши, 1889 çултан тытăнса 1913 çулччен, Ильинка лесничествин лесничийĕнче (халĕ вăл республика сăнавлă вăрман хуçалăхне кĕрет) Бронислав Гузовский ĕçленĕ. Вăл республикăра юман вăрманĕсем ӳстерессипе тĕрлĕрен сăнав ĕçĕсем сахал мар туса ирттернĕ, практикăлла ĕçсем пурнăçланă. Юман тăрăхĕсене ирĕклĕ тата искусственнăй майпа ӳстерессипе вăл пухнă опытпа паян та анлăн усă кураççĕ.

Ильинка лесничествин 9-мĕш кварталĕнче вырнаçнă юмана чăннипех те Б.И. Гузовскийăн вăрман ĕçĕ-хĕлне халалланă палăк темелле. Унăн вуллин диаметрĕ 170 сантиметр. ЧР çут çанталăка хӳтĕлекен патшалăх комитечĕн йышăнăвĕпе вăл çут çанталăк палăкĕ шутланать. Б.И. Гузовскийăн пархатарлă ĕçне пулах Ильинка лесничествин тăрăхĕнче çĕпĕр кедрĕ, туя тата пирĕн патра сайра тĕл пулакан ытти йывăçсем те чиперех ӳсеççĕ.

1929 çулта кунта "Ильинский" кану çурчĕ уçнă пулнă. Халĕ унта ачасен сывлăх сиплевĕн лагерĕ ĕçлет. Çу кунĕсенче лагерьте канма, сывлăха çирĕплетме пур условисем те çителĕклĕ.

**Кăларăма В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

# Кил тата хушма хуҫалăх



**Цифрăсемпе фактсем**

– Тĕпчеврен ҫӳҫ алюмини пекех ҫирĕппи курăнать.
– Ҫӳҫ талăксерен 0,4 миллиметр таран ӳсет.
– Ҫитĕннĕ ҫыннăн кашни кунах 200 ҫӳҫ пĕрчи тăкăнать. Сывлăх хуралҫисем ҫирĕплетнĕ тăрăх ҫакă вăл йĕркеллĕ пулăм шутланать.

## «Техника ăсталасси – манăн юрату»

**Пирĕн хушăри Кулибинсем**



Республикăра иккĕмĕш ҫул гражданcем хăйсен килĕсенче ăсталанă трактор техникин «21 ĕмĕрти Кулибин» конкурсне ирттерни пире те ҫак ăстаҫăсем ҫине ҫаврăнса пăхтарчĕ. Уйрăм ҫынсем ăсталанă трактор техники, ял хуҫалăх машинисемпе оборудованисем тепĕр чух заводринчен те пахалăхлăрах пулса тухаҫҫĕ. Тепĕр майлă каласан вĕсем ҫĕр ĕҫченне ҫывăхарах тăраҫҫĕ. Ҫавăнпа та Раҫҫей Федерацийĕпе Чăваш Республики вĕсем ҫине тимлĕх уйăрнине ырлассăм килет кăна.

Иртнĕ ҫул республикăра пĕрремĕш хут иртнĕ ҫак конкурса пирĕн районтан 9 ҫын хутшăннăччĕ. Конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе жюри членĕсем Юнкăран пынă Валерий Прокопьевич Пигачева **(сăн ӳкерчĕкре)** пĕрремĕш преми – 10 пин тенкĕ – парса чыслани халĕ те асра. Вăл конкурсра хăйĕн аллипе трактор ҫинчи кранран пуҫласа ҫĕр улми кăлармалли агрегат таран, ял хуҫалăх техникин 6 единицине, ăсталанине кăтарнăччĕ. Муркашсене ҫав ӳсĕм ун чух самай хăпартлантарчĕ.

Тăтăшах шыраври ăстапа иртнĕ кунсенче тĕл пулма май килчĕ. Валерий Прокопьевич яланхиллех хăй ăсталаса ура ҫине тăратнă трактор патĕнчеччĕ.

– Кăҫал та «21 ĕмĕрти Кулибин» конкурса хутшăнтăм. Килĕшет мана ку конкурс. Ман пек «Кулибинсем» республикăра ҫеҫ мар, районта та татах пур иккен. Ку вара – хăйне евĕр ăмăрту никĕсĕ. Пĕрре пуҫланнă ĕҫре тĕрĕссипе малараххах пулас килет, – кăмăллăн калаҫать кăҫалхи конкурсра 3-мĕш пулнă В. Пигачев хăйĕн «хурҫă учĕ» ҫинчен куҫ илмесĕр.

Ҫĕр ĕҫĕнчен ютшăнмасăр ӳснĕскер ĕҫ хушшинчех тимĕр-тăмăр пуҫтарса ачаран ĕҫ хатĕрĕсем майлаштарма юратнă. Конструктор ĕмĕт-тĕллевне вара ун умне пурнăҫ кăларса тăратнă. 52 ҫул водительте ĕҫленĕ арҫын паян хăйĕн ĕмĕрĕнчи кашни ĕҫ вырăннех ырăпа аса илет. «Ҫамрăклăхрах водитель правине алла илтĕм те паян та ҫак ĕҫрен пăрăнаймастăп», – тет 71 ҫулхи арҫын. «Новая Юнга» хуҫалăхра, хысҫăн ҫурҫĕрте автомашинăпа вăй хунăскер техникăпа ҫывăх туслашса кайнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар.

– Трактор-машина – манăн тĕп пурнăҫ, – терĕ Валерий Прокопьевич калаҫу ку тĕле ҫитсен. – Техника ăсталассипе 2003 ҫулта аппаланма пуҫларăм. Ҫак вăхăтра тăван колхоз саланчĕ, техники вара хама та, ял ҫыннисене те тăтăш кирлĕ. «Ухмах пуҫ» алла канăҫ памасть тенĕ пекки пулса тухрĕ пулас. Паян манăн трактор ҫинче кранĕ те, юр тĕксе ҫул уҫмалли те, копалка та, ҫеҫке ҫулмалли те, утă ҫулмалли те, лебедка та, плуг та, ҫĕр улми кассисем тумалли те, культиваторпа йывăр сӳре те, пушара тухмалли ятарлă насослă цистерна та пур. Куратăр пуль – манăн ĕҫ йăлтах ялти халăх валли, – терĕ хресчен чунĕллĕ пĕлĕшĕм. – Ыранхи куна пăхса шанчăклă ĕҫлекен катăк йĕмпе чупса ҫӳреместех. Кам пурнăҫ япăххине кашни утăмра шырать – унăн пӳрт-ҫурчĕ те ишĕлет, хăй те мухмăрсухмăртан тухса пĕтеймест. Ҫакна эпĕ те, манăн пĕлĕшĕмсем те ҫирĕп ăнланса илчĕҫ тесе шутлатăп. Ку вăл – ӳсĕмсен никĕсĕ. Ĕҫлесен ялта та хуларинчен катăк мар пурăнма пулать.

Харпăр хăй вăйне ытларах шанакан пирĕн ентешĕн ĕмĕчĕсем вара татах пысăкрах.

**А. БЕЛОВ.**

**Сад-пахчаҫăн уйăх календарĕ**

## Урамра – раштав, умра – Ҫĕнĕ ҫул

Черетлĕ раштав уйăхĕ ума тухнине сисмерĕмĕр те. Ҫак уйăхра хĕвел пăхать, анчах ăшăтаймасть. Статистика ҫирĕплетнĕ тăрăх раштав уйăхĕнчи уяр кунсем – сайра пулăмсем. Апла пулин те ҫулталăк вĕҫленнĕ хушăрах сад-пахчара пурнăҫламалли ĕҫсем те пĕтмен-ха.

Ĕлĕкрех раштав уйăхне пăхса ҫитес ҫулхи ҫанталăк пирки сăнавсем тунă. Паянхи пурнăҫра вара вĕсем тӳр килмеҫҫĕ. Апла пулин те хăш-пĕр сăнавсем пирки аса илни те ытлашши пулас ҫук. Раштав уйăхĕ типĕ килсен ҫуркуннепе ҫулла типĕ пулаҫҫĕ. Ҫак уйăхра сивĕ тата юрлă, паслă тата ҫиллĕ пулсан – ҫитес ҫул тухăҫпа савăнтарĕ. Апла-и, капла-и, анчах сад-пахча ĕҫĕпе тимлекенсене уйăх календарĕпе паллаштарни те ытлашши пулмĕ.

Хĕл тапхăрĕн пĕрремĕш кунĕсем пӳлĕмри ӳсен-тăрана шăварма тата апатлантарма юрăхсăр вăхăт шутланаҫҫĕ. Пахчаҫăсемшĕн ҫак кунсем акмалартма вăрлăх хатĕрленĕ май тата унччен акнă-лартнă ӳсен-тăрана хӳтĕлемелли препаратсене, удобренисене, ӳсме пулăшакан стимуляторсене туянма меллĕ. Ҫад-пахчара хуҫалăх ĕҫĕсене пурнăҫланăни ытлашши пулас ҫукки пирки те манмалла мар.

Уйăхăн малтанхи кунĕсенче пӳлĕмри ӳсен-тăрана касман пулсан эсир тĕрĕс тунă. Кунпа пĕрлех ҫак кунсенче вăрлăх акни юрăхлă. Пӳлĕмри ӳсен-тăрана шăварни те, апатлантарни те ытлашши пулмасть.

Хĕл ытларах та ытларах вăй илсе пынă май килти хушма хуҫалăхсенчи пахчасенче кил хуҫисен юр тытассипе тимлемелле. Ҫырла тĕмĕсене юрпа купаламалла.

Иртнĕ кунсенче эсир хăвăр пурăнакан пӳлĕмре симĕсле ҫиме сухан, ыхра, кресс-салат тата ҫулҫăллă горчица акнă-лартнă пулсан сирĕн ĕҫ сад-пахчаҫăн уйăх календарĕпе килĕшсе тăнине палăртмалла.

**Раштав уйăхĕн 9-мĕшĕ.** Уйăх календарĕпе пӳлĕмре ӳсекен чечексене лартни вырăнлă. Пӳлĕмри ӳсен-тăрана сăтăрҫăсенчен хӳтĕлемелле. Купăста тăварлама тата компотсемпе соксем янтăлама чи меллĕ вăхăт.

**Раштав уйăхĕн 9–11-мĕшĕсем.** Ӳсен-тăранпа нимĕнле ĕҫ те пурнăҫлама юрамасть. Купăста тăварлама та сĕнӳ ҫук.

**Раштав уйăхĕн 11–14-мĕшĕсем.** Витаминлă калчасем ӳстерме кирек епле культура акни те юрăхлă пулĕ. Ӳсен-тăрана шăварма тата вĕсен сăтăрҫисемпе кĕрешме меллĕ вăхăт. Купăста тăварлама, пан улми йӳҫĕтме, сокпа хĕрлĕ эрех хатĕрлеме юрăхлă тапхăр.

**Раштав уйăхĕн 14–16-мĕшĕсем.** Пахчара юр тытассипе тимлемелле. Ҫырла тĕмĕсене юр купаламалла. Улмуҫҫисем тавра юр таптаса пусăрăнтармалла. Пӳлĕмри ӳсен-тăрана сăтăрҫăсенчен хӳтĕлемелле. Ҫуркунне сыпма сапансем янтăламалла.

**Раштав уйăхĕн 16–18-мĕшĕсем.** Пахчара юр тытассипе ĕҫлемелле. Туратсем ҫинчи юра силлемелле. Улма йывăҫҫисем таврашĕнчи юра таптаса пусăрăнтармалла. Ҫуркунне сыпма сапансем янтăламалла. Ҫак кунсенче банкăсем хупассинчен тăхтамалла.

**Раштав уйăхĕн 18–20-мĕшĕсем.** Пӳлĕмри ӳсен-тăрана шăварма тата апатлантарма юрăхсăр кунсем шутланаҫҫĕ. Вăрлăх тата ӳсен-тăрана хӳтĕлемелли препаратсене, удобренисене, ӳсме пулăшакан стимуляторсене туянăр. Симĕсле ҫиме петрушка акма юрать.



**Раштав уйăхĕн 20–22-мĕшĕсем.** Пӳлĕмри чечексене органикăллă удобренисемпе, куршакри тăпрана кăпкалатма меллĕ вăхăт. Пӳлĕмри ӳсен-тăрана сăтăрҫăсенчен хӳтĕлемелле. Купăста тăварлама, пахча ҫимĕҫ консервлама, компотсем хатĕрлеме юрăхлă.

**Раштав уйăхĕн 22–23-мĕшĕсем.** Пахча ҫимĕҫе шăнтса хуни лайăх. Вăрлăх тата ӳсен-тăрана хӳтĕлемелли препаратсене, удобренисене, ӳсме пулăшакан стимуляторсене туянăр.

**Раштав уйăхĕн 23–25-мĕшĕсем.** Ӳсен-тăранпа нимех те ĕҫлемелле мар.

**Раштав уйăхĕн 25–26-мĕшĕсем.** Пӳлĕмре симĕсле ҫиме сухан, ыхра, кресс-салат тата ҫулҫăллă горчица лартма тăрăшмалла. Хуҫалăх ĕҫĕсем пурнăҫлани ытлашши пулмĕ.

**Раштав уйăхĕн 26–29-мĕшĕсем.** Уйăх календарĕпе килĕшӳллĕн пӳлĕмри пур ӳсен-тăрана та шăварма тата апатлантарма юрăхсăр кунсем. Вăрлăх тата ӳсен-тăрана хӳтĕлемелли препаратсене, удобренисене, ӳсме пулăшакан стимуляторсене туянăр. Хуҫалăх ĕҫĕсене пурнăҫлама меллĕ.

**Раштав уйăхĕн 29–31-мĕшĕсем.** Темĕнле пулсан та пӳлĕмри ӳсен-тăрана касма юрамасть. Вăрлăх акни юрăхлă. Пӳлĕмри ӳсен-тăрана шăварни те, апатлантарни те ытлашши пулмасть.

**ҪĔНĔ ҪУЛ ЯЧĔПЕ САНА, ХИСЕПЛĔ ПАХЧАҪĂ!**

**Вулакансен ыйтăвĕсене хуравлатпăр**

## Сĕтел ҫинче – качака сĕчĕ

**Ялсенче качака усракансем нумайланчĕҫ. Эпĕ тăтăш ҫырăнса илекен район хаҫачĕ те ҫак ен ҫине тимлĕрех пăхма пуҫлани сисĕнет. Качака сĕчĕ усăллă теҫҫĕ те ҫывăх номерсенчех ҫакăн пирки тĕплĕнрех каласа пама май ҫук-ши?**

**С. МАТВЕЕВ.**
**Муркаш сали.**



***Вулакан ыйтăвне кĕтнĕнех ун пирки редакци ĕҫченĕсем ĕҫлĕ планеркинче те калаҫнăччĕ. Ку ыйтăва эпир кун йĕркинчен кăлармăпăр. Вулавҫă ыйтăвĕпе эпир район терапевтне Эльвира ФОМИНАНА паллаштартăмăр. Сывлăх хуралҫин хуравĕ сире тивĕҫтерессе шанатпăр.***

– Качака сĕчĕн уйрăмах паха енĕсене нумай тĕпчевсем ҫирĕплетеҫҫĕ. Ялсенче качака усракансем те ҫакăнта хăйсен тĕслĕхĕсене илсе кăтартма пултараҫҫĕ.

Историе пăхсан Ĕлĕкхи Римра качака сĕчĕпе ҫынсен сула (селезенка) чирне сипленĕ. Авиценна ун пирки «чи шайлашуллă апат-ҫимĕҫ» тесе ҫырса хăварни паллă. Качака сĕчĕн сывату енĕсене вăйлатма авалхи ҫынсем ăна тĕрлĕ хутăшсем хушса вĕретнĕ: сулана (селезенка) сыватма кунжутпа, юнлă варвиттирен – тинĕс чулĕсем е урпа кĕрпи.

19-мĕш ĕмĕр пуҫламăшĕнче качака сĕчĕ ача кăкăр сĕтĕнчен те пахарах тени вăй илме пуҫланă. Качака туберкулезпа, бруцеллезпа тата ĕне чирлекен ытти чирсемпе чирлеменрен унăн сĕчĕ те ĕненнинчен лайăхрах. Ку продуктри белокăн паха енĕ ытларах, пиакринпа тиамин ытти апат-ҫимĕҫринчен нумайрах. Тиамин «В» ушкăнри витаминсен шутне кĕрет. Этем пурнăҫăн нихăш тапхăрĕнче те унсăрăн пурăнаймасть.

Педиатрсем качака сĕчĕ пĕчĕк ачасене варвиттирен сыватма пулăшнине, аллергологсем ĕне сĕчĕ ҫиме пултарайман ачасене качака сĕчĕпе апатланма сĕннине илтме пулать. Кăкăр сĕчĕ сахал амăшĕсемшĕн те качака сĕчĕ ҫăлăнăҫ вырăннех.

Этемлĕхе сывлăхпа ҫамрăклăх парнелекен ҫак продуктпа апатланма пире Турри хăй хушнă тесен те йăнăш пулмĕ.

Качака сĕтĕнче пирĕн организма йывăр чирчĕртен сыватакан тата ҫамрăклăх парнелекен асамлă япаласем пур-ши? Гиппократ шучĕпе качака сĕчĕ – туберкулезран сывалмалли шанчăклă ҫимĕҫ. Авиценна вара чирлисене ватлăх чирĕпе аптăрасран тăтăш качака сĕчĕ ĕҫме сĕннĕ. Халăх медицини паян та качака сĕтне чирпе вăйсăрланнисене вăй пухнă чух, апат-ҫимĕҫ аллергийĕпе аптăракан ачасене ĕҫме сĕнӳ парать.

Паянхи диетологи качака сĕчĕн чăн пĕлтерĕшне уҫăмлăрах палăртать. Ҫавăнпа та ҫак продуктпа сипленесси те нумай енлĕ вăй илсе пырать. Уйрăмах ачасем тĕлĕшпе. Ăсчахсен тĕпчевĕсем ăна хĕрарăмăн кăкăр сĕчĕпе, ĕне сĕчĕпе танлаштарма май пани те усăллă енсем ҫине ытларах пăхтарать.

## Купăста пĕр гектар ҫинче ӳсрĕ

**Пахча савăнтарчĕ**

Паянхи килти хушма хуҫалăхсен ĕҫне-хĕлне тишкеретĕн те тĕп вырăнта патшалăх пулăшăвĕ мар, ҫĕр ĕҫне чунĕпе парăннă хресчен ачисем тăраҫҫĕ. Манăн вĕсене рынок аталанăвĕн тапхăрĕнче ҫĕнĕлĕхсене алла илсе ӳссе тĕрекленнĕ, йывăрлăхсем умĕнче пуҫ усман ҫынсем теес килет. Пылчăкран, тислĕкрен хăраманскерсем паян район тăрăх ют ҫĕр-шывсенче туса кăларнă ҫăмăл машинăсемпе е тиев турттаракан тулли автомашинăсемпе ҫӳрение асăрхатăп та ял хуҫалăхĕ ҫĕнĕ аталану шайне ура ярса пуснине туйса илетĕп. Ҫапла пулмалла та ĕнтĕ – хамăра тăрантаракан ҫĕр-аннемĕр хуҫасăр пулаймасть. Эпирҫке унăн ачисем, ывăлĕ-хĕрĕсем.

Районта иртнĕ Тыр-пул уявĕнче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Вомпăкассинче пурăнакан Анна Геннадьевнăпа Владимир Филимонович Пикушкинсем хăйсен килти хушма хуҫалăхĕнче туса илнĕ шултра пуҫлă купăстапа суту-илӳ тунине тĕл пулсан вĕсен ĕҫ ăнăҫăвĕшĕн «вăрттăн» хĕпĕртерĕм. Уяв епле иртнипе кăсăкласан тавар туянакансем патне тулли сеткă купăста илсе пыракан кил хуҫинчен хресчен чунĕллĕ хурав илтрĕм:

– Ял ҫыннин, ҫĕр ĕҫченĕн канăвĕ-уявĕ вăл – хăйне евĕр вăрттăнлăх. Хĕрӳ ĕҫ вăхăтĕнче хресчен кану пирки шутламасть те. Мĕн акни-лартнине пуҫтарса кĕртсен малашлăх пирки пуҫ ватнă чух иртет унăн тулли сĕтел хушшинчи уявĕ-канăвĕ. Ку вăл ялта пурăнакан кашни ҫыннăн паллă. Хамăр килти хушма хуҫалăхра пĕр гектар купăста лартса туса илтĕмĕр кăҫал. Тăрăшнине кура пахча та савăнтарчĕ. Ҫĕре юратса ĕҫлекене вăл та юратупа-ăнăҫупах тавăрать иккен. Халĕ тăрăшуллă ĕҫпе туса илнĕ продукцие пасарсене илсе ҫӳретпĕр, – пулчĕ хурав.



Икĕ ывăл ӳстерекен мăшăр вунă ҫул ĕнтĕ пахча ҫимĕҫ туса илсе ҫемье бюджетне пуянлатса пырать. Ҫамрăк ăру та ĕҫе юратса ӳсет. Ĕҫрен катара тăман ҫемьере урăхла пулаймасть те.

**А. ПЕТРОВ.**

Пирĕнпе юнашарах

# Ăнланмасть? Е тӳрленме те шутламасть?

***Чăн та тепĕр чухне çын шутламасăрах преступлени тума пултарать – пурнăçра мĕн тĕрлĕ кăна лару-тăру пулмасть пулĕ. Анчах та пĕрре йĕркене пăснă çын пурпĕрех çав çултан пăрăнасшăн мар пулсан ку ыттисемшĕн хăрушлăх кăларса тăратать. Обществăри йĕркене, саккунсене, мораль тата этика нормисене шута хуман çын ыттисене те «чирлеттерсе яма» пултарать.***

Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан Геннадий те **(Ред. – арçын ятне улăштарнă.)** çавăн пеккисен шутĕнче. Мăшăрĕпе уйрăлнă, анчах та вăл пĕчĕк ача ашшĕ. Апла пулсан вăтăр çулхи арçын çинчен яваплăха никам та илмен-ха. Вăл вара пурин çине те тахçанах алă сулнă.

Нарколог врач патĕнче те ун çинчен çырса хунисем пур: опийлĕ тата психикăна сиен кӳрекен ытти веществосем йышăннине пĕрре кăна мар çирĕплетсе диагноз лартнă. Акă пĕлтĕр август уйăхĕнче Геннадий хăйне валли мăкăнь ӳсен-тăранне «тупать». Çак пуянлăхпа арçынна шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем тытса чараççĕ те. Экспертиза ӳсентăран наркотикла вещество пулнине çирĕплетет.

Суд ларăвĕнче айăпланакан арçын хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнать. Геннадий Уголовлă кодексăн 228 статйин 1 пайĕнче çырса кăтартнă преступление тунине çирĕплетсе суд ăна поселени колонине ярса 8 уйăхлăх ирĕкрен хăтарма йышăнать.

Арçыннăн ку таранчченхи пурнăçĕ те питĕ «капăр». 1999 çултах асăннă статьяпа паллашма ĕлкĕрнĕ вăл. Ун чухне Муркаш район сучĕ арçынна условлă майпа айăпланă. Çавăнпах тен тепĕр çулăн пĕрремĕш уйăхĕнчех Геннадий каллех суд тенкелĕ çине ларать. Ку хутĕнче тĕп хулари Ленин район сучĕ вăрăлла ĕçшĕн ăна çулталăк çурăлăх ирĕкрен хăтарма йышăнать. Амнистие лекнĕрен вăл унтан часах тухать. Хăй мĕнле пурнăçпа пурăннине, инçех мар вырăнсенче мĕншĕн пулнине те ăнланмасть арçын. 2001 çулта каллех – Уголовлă кодексри 158 статья. Муркаш район сучĕ вăрăлла ĕçе тишкерсе арçынна 4 çул та 1 уйăхлăх ирĕкрен хăтарма йышăну тăвать. Çирĕп режимлă юсану колонийĕнче. Анчах та çирĕплĕх çителĕксĕр пулнă мĕн. 2006 çулта ăна арестлеççĕ – 161 статья (çаратни). Çапла çак «чечек çыххипе» Геннадий пурнăç çулĕпе утать те.

Пĕлтĕр 8 уйăхлăха ирĕкрен хăтарни патне таврăнар. Çак срок вĕçленичченех арçын кăçал май уйăхĕнче ирĕке тухать: хăйне лайăх енчен кăтартнипе, йĕркеллĕ тытнипе. Ирĕкрен хăтарнине наказание пурнăçламалли урăх мелпе улăштарса параççĕ – тӳрленӳ ĕçĕсем. Çак ĕçсене пурнăçлама районсем хушшинчи Муркашри 11 № ĕç тăвакан уголовлă инспекци арçынна Мăн Сĕнтĕрте вырнаçнă пĕр предприятие ĕçе вырнаçтарма ходатайствăпа тухать. Ĕçе илеççĕ. Ĕç укçин пĕр пайĕ саккунпа килĕшӳллĕн патшалăха юлать.

Пĕр тапхăр арçын йĕркеллĕ ĕçлет. Анчах та хăйне пулăшу панине каллех шута хумасть. Эрехпе иртĕхме пуçланăран наказание йĕркеллĕ пурнăçламасть. Çулла вара, тӳрленӳ ĕçĕн тапхăрĕ пынă вăхăтра, малтанхи арăмне хĕненипе ун тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçараççĕ. Сентябрь уйăхĕ те «парне» хатĕрлет: чăтса тăраймасть арçын – Мăн Сĕнтĕр салинчи уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче каллех мăкăнь пухать...

Мĕн кĕтме пулать-ха çакăн пек çынсенчен? Каллех вăрăлла ĕç, каллех çаратни, хĕнени, наркотик, эрех... Апла Геннадий пек çынсенчен кирек кам та шар курма пултарать. Çакăн пеккисем вара ирĕкре тӳрленмеççĕ пулас. Хальхи вăхăтра Геннадий инçех мар вырăнсенче «хĕл каçать».

**В. КОЖЕВНИКОВ,**
**районсем хушшинчи Муркашри 11 № ĕç тăвакан уголовлă инспекци пуçлăхĕ.**

Хисеплĕ ял-йыш

# Хастарлăхпа палăрса тăрать

Муркаш районĕ чăннипех те ырă чун-чĕреллĕ, ăслă-тăнлă та маттур ĕçченсемпе пуян. Уйкас Янасал тăрăхĕнчи ял тăрăхĕнче те çакăн пек пултаруллă çынсем нумай. Вĕсенчен пĕри – сăпайлă та ăста вĕрентекен – Купăрля ялĕнче çуралса ӳснĕ Валентина Никтополионовна Ипатьева.

Вырăссен паллă писателĕ Лев Толстой çапла каланă: «Хăйĕн ĕçне кăна мар, ачасене чунтан юратакан учителе çеç чăн-чăн Вĕрентекен теме пулать». Учитель вăл этемлĕхĕн чи хисеплĕ, сăваплă çынни. Ун умĕнче пуç таймасăр, çĕлĕк хывмасăр иртмен. Вăл ачасене кăна мар, ыттисене те пур енĕпе те тĕслĕх кăтартать-çке-ха...

Тĕп пĕлӳ илсенех Валентина Никтополионовна Канашри педагогика училищине вĕренме кĕрет. Алла диплом илнĕ хыççăн вицĕ çул Шупашкарти ача садĕнче тăрăшать. Çемье çавăрсан, тăван яла куçса килсен малтанах Исетерккĕ шкулĕнче ĕçлет, ун хыççăн Сосновкăри тĕп шкула куçать. Хăйĕн ăсталăхне ӳстерес тесе Валентина Никтополионовна И. Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнче аслă пĕлӳ илет. 35 çул хушши вăй-халне те, чун ăшшине те шеллемен вăл вĕренекенсемшĕн. Ачасен пултарулăхне яланах аталантарма тăрăшнă. Тăван чĕлхене, тăван çĕр-шыва юратма вĕрентнĕ. Хăйĕн ĕçне килĕштерсе пурнăçланипех тивĕçлĕ канăва тухичченех республика, район тата ял тăрăхĕн Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсене, «Пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» паллăна та тивĕçет.

Хăйĕн учительне кура ĕнтĕ Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта вăй хуракан Ангелина Иосифовна Белова та учитель профессине суйласа илнĕ. Хăйĕн пĕрремĕш вĕрентекенĕ пекех вăл та пуçламăш классене вĕрентет, ĕçĕнче те унăн меслечĕсемпе усă курать. Валентина Никтополионовна вĕрентсе кăларнă ачасем нумайăшĕ аслă пĕлӳ илсе пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утаççĕ.

Хальхи вăхăтра Валентина Никтополионовна ял тăрăхĕнче ВУС специалистĕнче ĕçлет. Çав хушăрах ăна Купăрля халăхĕ депутата суйланă. Пенсионерсем, инвалидсем тата ветерансем хăйсене ертсе пыма шаннă.

Хăйĕн мăшăрĕпе вицĕ ача ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Аслă хĕрĕ те амăшĕн çулĕпех кайнă – Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче преподавательте тăрăшать. Иккĕмĕш хĕрĕ аслă пĕлӳ илнĕ ĕнтĕ, çартан таврăннă ывăлĕ те ял хуçалăх академийĕнче вĕренет.

Иртнĕ кунсенче Валентина Никтополионовна хăйĕн сумлă юбилейне паллă турĕ. Эпир те ăна саламласа вăйхал, çирĕп сывлăх, хастарлăх сунатпăр.

**С. МАКСИМОВА.**

Прогноз погоды

| | суббота 10 декабря | | | | воскресенье 11 декабря | | | | понедельник 12 декабря | | | | вторник 13 декабря | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -4 | -4 | -4 | -4 | -3 | -2 | -2 | -1 | -2 | -3 | -1 | -1 | -2 | -2 | -2 | -5 |
| Давление мм | 753 | 752 | 751 | 750 | 749 | 747 | 745 | 744 | 746 | 748 | 750 | 752 | 755 | 757 | 757 | 757 |
| Влажность % | 94 | 94 | 93 | 93 | 93 | 90 | 94 | 97 | 93 | 93 | 93 | 96 | 94 | 96 | 90 | 88 |
| Ветер м/сек | Ю 4 | Ю 4 | Ю 4 | Ю 5 | Ю 5 | Ю 6 | Ю 7 | Ю 5 | З 3 | Ю-З 3 | З 4 | З 4 | З 3 | Ю-З 3 | Ю-З 4 | Ю 5 |
| Солнце восход/заход | | 09:12 | 16:18 | | | 09:13 | 16:18 | | | 09:14 | 16:18 | | | 09:15 | 16:18 | |
| Луна восход/заход | | 16:09 | 08:55 | | | 17:06 | 09:45 | | | 18:12 | 10:26 | | | 19:26 | 10:57 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

Пĕлтерӳсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:280303:3, местоположение: установлено относительно ориентира, расположенного в границах участка. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д.Шатьмапоси, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6100 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:250501:88, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, д. Васькино, для строительства гаража, площадью 51 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:091101:123, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:091101, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2867 кв.м.;

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1590, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:072501, для сельскохозяйственного производства, площадью 137960 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

На производства в Москву и Московскую обл. требуются:
ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ
Питание, проживание и служебный транспорт – **БЕСПЛАТНО**. Вахта. Выезд группами до предприятия. Гарантии. З/п 25 000-35 000 руб.
Тел.: 8(8352)29-80-30. 3-3.

**Продаю однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Цена договорная. Тел.: 8-937-388-24-34.**

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок.**
**Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.**
**Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.**
**Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами. 45-50.**




**ГУСИ – к новогоднему столу. С наступающим Новым годом! Тел.: 8(927)66-55-900.**

* * *

**Вун виçĕ уйăхри хĕрлĕ-шурă тынашки сутатăп.**
**Тел.: 8-903-063-86-84.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку, овец.**
**Тел.: 8-905-342-39-43. 10-13.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 6-12.**

* * *

**Продается черно-пестрая корова второго отела.**
**Тел.: 8-906-381-10-36. Юля.**

* * *

**Продаем: брус любого сечения, доски обрезные и необрезные, срубы на заказ.**
**Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 1-5.**

* * *

**Муниципальному унитарному предприятию жилищно-коммунального хозяйства «Моргаушское» на постоянную работу требуется бульдозерист на ДТ-75 и Т-130. Оплата труда – договорная.**

* * *

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, песок речной, гравмассу, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 2-5.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.**
**Тел.: 8-905-343-60-63. 7-10.**

* * *

**Мебель от производителя, цены ниже рыночной (шкафы, кухни, стенки, прихожие, матрацы разных размеров). Тел.: 8-903-358-67-19, 8-927-859-65-51. 2-8.**

* * *

**ПРОДАЮ СОБОЛЬ ГАЗ-22171 2003 г.в., 406 дв. 2.3 л. 98 л.с., карбюратор,8 мест, салон трансформер люкс, раскладной стол., капвложений не требует (сел и поехал).**
**Тел.: 89063812560, 89278540054. Арвид.**

* * *

**Продаются козы. Тел.: 66-3-03, 8-937-956-33-63.**

* * *

**Продаю коз. Тел.: 8-937-381-49-25.**

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1144, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:072501, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6482 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:061002:127, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:061002, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 3781 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.




МЦФ Межрегиональный центр финансирования
www.mcf21.ru
8-967-473-61-21, 69-3-75
ООО “Межрегиональный Центр Финансирования”
БЫСТРЫЕ ЗАЙМЫ на любые цели
» низкие % ставки (от 3% до 5%) в месяц от остатка суммы займа
» ДЛЯ ПОКУПКИ И СТРОИТЕЛЬСТВА ЖИЛЬЯ ПОД МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ
Розыгрыш призов среди клиентов! С 5 по 30 декабря. Подробности по тел. 8-967-473-61-21, 69-3-75
Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Советская, 16

**В Москву требуются фасовщицы, грузчики. Жилье, питание – бесплатно. З/п 30000 руб.**
**Тел.: 36-42-92, 36-42-94, 8(8352)57-21-63. 2-5.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ от 3000 руб.**
**Установка, гарантия.**
**Тел.: 8-905-345-77-19. 10-12.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 5-5.**

для пайщиков
СБЕРЕЖЕНИЯ
• АКЦИЯ "НОВОГОДНЯЯ КОПИЛКА" с 1 по 30 декабря 2011 г.
• % ставки увеличены, подарки
ЗАЙМЫ
*АКЦИЯ "НОВОГОДНЕЕ ЖЕЛАНИЕ" до 30 декабря 2011 г.*
*% СТАВКИ СНИЖЕНЫ!*
• для пенсионеров и постоянных пайщиков - **льготы**
• на покупку и строительство жилья под **МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ**
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ “СОДРУЖЕСТВО”
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж 62-6-86
www.kpksodrugestvo.ru 8 900 333 0001

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.
Пичете панă 09.12.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4364.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.